28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ИЮНЬ
7
КĔҪНЕРНИКУН
109(6960) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Германи паранни çинчен тата верховнăй влаçа союзлă тăватă державăн правительствисем хăйсем çине илни çинчен çырнă декларацие алă пусни

Германи паранни çинчен тата Германи тĕлĕшпе верховнăй влаçа Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешнĕ Королевствăн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствисем тата Франци республикин Вăхăтлăх Правительстви хăйсем çине илни çинчен калакан

ДЕКЛАРАЦИ

Германин типçĕр çинчи, тинĕсри тата сывлăшри хĕçпăшалла вăйĕсене пуçĕпех çĕнтернĕ, вĕсем вара пĕр сăмахçăрах парăнчĕç, вăрçăран ответ тытакан гитлерла Германи хăйне çĕнтернĕ державăсене хирĕç тĕкех тăраймасть. Çакăнпа ĕнтĕ Германие пĕр сăмахçăрах парăнтарассине пурнăçа кĕртнĕ. Германи хăйне халь е каярахпа кăларса тăратма пултаракан требованиссене пăхăнса пурăнмалла туса хучĕ.

Германире халĕ çĕршыври йĕркелĕхе тытса тăма пултаракан, управлени ĕçĕсене туса пыма тата çĕнтернĕ державăсен требованийĕсене пурнăçа кĕртсе пыма пултаракан центрти правительство е власть çук.

Шăпах çакăн пек вăхăтра ĕнтĕ, Германи тĕлĕшпе малашне йышăнма пултаракан решенисене кансĕрлемесĕр, Германин хĕçпăшалла вăйĕсем малашне хирĕç тăрассине пĕтерсе лартас, Германире йĕркелĕх сыхласа хăварас тата Германие тытса тăрас тĕлĕшпе распоряженисем пама тата Германин халех мĕн-мĕн тумалли çинчен тӳрренех каласа пĕлтерме кирлĕ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешнĕ Королевствăн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Франци республикин Верховнăй Командованийĕсен представителĕсем, малалла «союзниксен представителĕсем» тенĕскерсем, хăйсен тивĕçлĕ Правительствисем хушнине тата Пĕрлешнĕ написен интересĕсемшĕн çакăн пек декларапи пĕлтерĕççĕ:

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешнĕ Королевствăн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствисем тата Франци республикин Вăхăтлăх Правительстви Германири верховнăй влаçа, вăл шутра Германи правительствин, Верховнăй командованийĕн тата областри, муниципалитетри е вырăнти правительствăсен е власть органĕсен аллинчи мĕнпур влаçа хăйсен аллине илеççĕ. Малта кăтартнă тĕллевсене пурнăçлас тесе, влаçа, правасене тата полномочисене хăйсем çине илни Германие аннексилени пулмасть.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешнĕ Королевствăн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствисем тата Франци республикин Вăхăтлăх Правительстви каярахпа Германин е унăн кирек хăш пайĕн чиккисене кăтартса парĕç, çавăн пекех тата Германин тата халĕ Германи государствин территорине кĕрекен кирек хăш районăн статутне палăртса парĕç.

Тăватă Правительствăн хăйсем çине илнĕ верховнăй влаçĕпе, прависемпе тата полномочийĕсемпе усă курса, союзниксен представителĕсем Германие татăклăнах çĕнтернинчен тата вăл пĕр сăмахçăрах парăннинчен тухса тăракан тата Германи пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ çакăн пек требованиссем каларса тăратаççĕ:

1-МĔШ СТАТЬЯ

Германи тата Германи çарĕн, тинĕç-çарĕн, сывлăш-çарĕн мĕнпур влаçĕсем тата Германи контроллесе тăракан пĕтĕм хĕçпăшалла вăйĕсем типçĕр çинче, тинĕсре тата сывлăшра вăрçă пыракан пур вырăнсенче те Пĕрлешнĕ Написен хĕçпăшалла вăйĕсене хирĕç тăма халех чарăнаççĕ.

2-МĔШ СТАТЬЯ

а) Германин тата Германи контроллесе тăракан мĕн пур çар карапĕсем, ку шутра тип çĕр çинчи, сывлăшри, сывлăшран тапăннине хирĕç кĕрешекен тата тинĕс-çар вăйĕсен, СС, СА тата гестапо, çавнашкалах тата хĕçпăшалла урăх тĕрлĕ пур вăйсен те тата пулăшакан организацисен те, вĕсем кирек ăста тăраççĕ пулсан та, пĕтĕмпех хĕçпăшалларланмалла, хăйсен хĕçпăшалĕне пурлăхĕсене союзниксен представителĕсем лартнă вырăнти союзлă командующисене е офицерсене памалла.

в) Маларах «а» пунктра кăтартнă вăйсен соединенийĕсемпе чăсен личнăй составне, малашнехи решенисене йышăнмăшăн, тивĕçлĕ союзлă государствăн хĕçпăшалла вăйĕсен Главнокомандующийĕ йышăннă тăрах, тыткăна лекнĕ çар сыннисем тесе шутласçĕ, вĕсем союзниксен представителĕсенчен распоряженисем пиччен, хăйсен вырăнĕсенчех юласçĕ.

д) Асăннă хĕçпăшаллă вăйсене Германин 1937 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнчен чиккисен тулашĕнчи мĕнпур çĕршывсенчен илсе тухасси союзниксен представителĕсем кăтартса панă тăрах пулса пырать.

е) Йĕркелĕхе тытса тăма тата хурал тăма кирлĕ алăри пăшалпа çеç хĕçпăшаллантарма тивĕçлĕ граждан полицийĕн отрячĕсене союзниксен представителĕсем палăртса парăççĕ.

3-МĔШ СТАТЬЯ

а) Çăран, тинĕс флочĕн тата граждан флочĕн пур самолечĕсем те, вĕсем кирек те мĕнле йышши тата кирек хăш государствăн пулсан та, халь Германире е Германи оккупациленĕ е вăл контроллесе тăракан территори е шыв çинче пулсан, союзниксем хăйсем усă куракан самолетсемсĕр пуçне, малашнехи распоряженисем пуличчен, çĕр çинче, шывра е каран çинче юлмалла.

в) Германи оккупацилемен тата контроллесе тăман территорисенче, е тинĕсенче, е вĕсем сийĕнче тăракан Германи самолечĕсене е унăн аллинчи самолетсене пурне те Германие, е союзниксен представителĕсем кăтартса панă урăх вырăна е вырăнсене ямалла.

4-МĔШ СТАТЬЯ

а) Германин тата Германи контроллесе тăракан мĕн пур çар карапĕсен, шыв сийĕнче тата шыв айĕнче çӳрекенскерсен, пулăшакан суднăсен, çавнашкалах тата суту-илӳ карапĕсемпе ытти суднăсен, çак декларацие кăларнă вăхăтра вĕсем кирек ăста пулсан та, тата халĕ Германи порчĕсенче тăракан кирек хăш государствăн суту-илӳ карапĕсен те хăйсен вырăнĕсенчех юлмалла е союзниксен представителĕсем кăтартса панă портсене е базăсене халех каймалла. Çав капитанисем тата командирсем малашнехи распоряженисем пуличчен карапсем çинчех юласçĕ.

в) Пĕрлешнĕ написен çак декларацие кăларнă вăхăтра Германи аллинче тăракан е вăл контроллесе тăракан мĕнпур карапĕсемпе судносене, вĕсене малашне тытса тăмалли правăна призовой судпа е мĕнле те пулин урăхла майпа татса панипе паманнинне пăхмасăрах, союзниксен представителĕсем кăтартса панă сроксенче вĕсем кăтартнă портсене е базăсене ярса памалла.

5-МĔШ СТАТЬЯ

а) Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен аллинче е Германи аллинче тăракан е Германи контроллесе тăракан çакăнта кăтартнă мĕн пур япаласене е кирек хăш япалана та çĕмĕрмесĕр союзниксен представителĕсем кăтартса панă сроксенче тата вĕсем кăтартнă вырăнсене пухса, союзниксен представителĕсен аллине тĕрĕс-тĕкĕл памалла:

1) Пĕтĕм хĕçпăшал, боеприпассем, снарядсем, пĕтĕмтерекен япаласем, çар оборудованийĕ, вăрçăра кирлĕ урăх тĕрлĕ хĕçпăшалсен складĕсемпе запасĕсем тата ытти тĕрлĕ çар материалĕсем;

2) Пур тĕрлĕ класри мĕнпур типĕс-çар карапĕсем, шыв çинче çӳрекеннисем те, шыв айĕнче çӳрекеннисем те, тинĕс-çар флотĕнчи пулăшакан судносем тата суту-илӳ судносем, шкиме юрăхлисем, юсама лартнисем, туса пĕтернисем е тăвакансем;

3) Пур йышши самолетсем те, сывлăшран тапăннине хирĕç кĕрешмелли тата авиаци оборудованийĕсемпе установкисем;

4) Сыхăнăвăн тата типçĕр çинчи, сывлăшри, шыври транспортăн мĕн пур оборудованийĕсемпе хатĕрĕсем;

5) Çартп пур установкăсемпе учреждениесем, ку шутра аэродромсемпе гидробазăсем те, портсемпе тинĕс-çар базисем, яланлăх тата вăхăтлăх складсем, шалти тата сыран хĕрринчи çирĕплетнĕ вырăнсем, крепоссем тата ытти тĕрлĕ çирĕплетнĕ районсем, çавнашкал укрепленисемпе установкăсен тата учрежденисен чертежĕсемпе планĕсем;

6) Маларах 1, 2, 3, 4 тата 5 пунктсенче кăтартса тухнă япаласене, материалсемпе хатĕрсене тума, е вĕсене туса кăларассине пулăшма, е вĕсемпе усă курма тунă, е вăрçă ĕçне урăхла майпа вителĕсем ыйтма пултаракан пур тĕрлĕ сведенисемпе документсем те.

в) Союзниксен представителĕсем хушсан, çаксене памалла:

1) «а» пунктра кăтартнă 5 категорирен кирек хăшне те тытса тăма е вăл ĕçлеттерме кирлĕ ĕç вăйĕ тата оборудовани:

2) Çавсене пула союзниксен представителĕсем ыйтма пултаракан пур тĕрлĕ сведенисемпе документсем те.

с) Союзниксен представителĕсем ыйтсан, союзниксен çарĕсене, органĕсене, вĕсен пурлăхĕпе снабжени япалисене чугун çулсем, шоссе çулĕсем тата çĕр çинчи ытти çулсем тăрăх, тинĕссемпе юханшывсем тăрăх е сывлăшпа туртăрса çӳреме кирлĕ пур хатĕрсем те памалла. Транспорт хатĕрĕсене пурне те йĕркеллĕ те юсавлă тытса тăмалла, çавăн пекех тата çак ĕçсене туса пыма кирлĕ ĕç вăйĕ, оборудовани памалла.

6-МĔШ СТАТЬЯ

а) Германи влаçĕсен, союзниксен представителĕсем кăтартса панă йĕркепе тăрах, Пĕрлешнĕ написен хĕçпăшалла вăйĕсен тыткăна лекнĕ мĕнпур сыннисене союзниксен представителĕсен аллине памалла тата çав сынсем халĕ Германире е Германи оккупациленĕ территорире ăста пурăннине кăтартса çырнă тулли списоксем памалла. Çакăн пек тыткăна пуранакан çар сыннисене ирĕке кăлариччен Германи влаçĕсемпе Германи халăхĕн вĕсен пурнăçĕпе пурлăхне сыхласа усрамалла, вĕсене сителĕклĕ таран анат-çимĕç, кĕпе-туйтир, сурт-йĕр, медицина пулăшăвĕ тата вĕсен званийĕсемпе должноçĕсене кура вĕсене укçа парса тăмалла.

в) Германи влаçĕсемпе Германи халăхĕ Пĕрлешнĕ написен ытти пур гражданĕсене те, хăйсем хупса лартнăскерсене, тытса чарнăскерсене е урăх майсемпе хĕсĕрленĕскерсене, çавăн пекех тата политикăлла шухăшсем пирки тата расине, ӳт-тир тĕсне, тĕнне, политикăлла шухăшĕсене кура сынсене тан мар тăвакан напистла мерăсене, закона е постановление пурнăçа кĕртнĕ пирки хупса лартна, тытса чарнă е урăх майсемпе хĕсĕрленĕ ытти пур сынсене те çавăн пекех пăхса усраса ирĕке кăлармалла.

с) Германи влаçĕсен сынсене хупса усрамалли вырăнсене контроллес ĕçе, союзниксен представителĕсем ыйтсан, çав представительсем уйăрса лартнă офицерсен аллине памалла.

7-МĔШ СТАТЬЯ

Германин тивĕçлĕ влаçĕсем союзниксен представителĕсене саксене памалла:

а) 2-мĕш статьăн «а» пуниктĕнче асăннă хĕçпăшалла вăйĕсем çинчен тĕплĕн пĕлтермелле, уйрăмăн пасе кăтартсан — союзниксен представителĕсене хĕçпăшалла вăйĕсен хисепĕ çинчен, вĕсем ăçта вырнаçса тăни çинчен. Германире е унăн тулашĕнче вырнаçса тăнине пăхмасăр, кирлĕ сведенисене çийĕнчех туписа памалла;

б) Мĕнăсем, мина лартнă вырăнсем тата типçĕр çинче, тинĕсре, сывлăшра çӳреме хăрушă ытти кансĕрлĕхсем тĕлĕшпе, çавăн пекех тата иртсе çӳреме хăрушă мар вырăнсем çинчен тĕплĕн пĕлтермелле. Çавăн пек хăрушă мар вырăнсене яланах уçă тытса тăмалла, вĕсене курăнмалла палăртмалла; пур мĕнăсене, мина лартнă вырăнсене тата хăрушă ытти кансĕрлĕхсене, май килнĕ таран, сиенсĕрлесе пымалла, навигаци оборудованийĕсене пурне те юсаса йĕркене кĕртмелле. Союзниксен представителĕсем кăтартса панă тăрах, Германин çав кăтартнă ĕçсене тума, çавнашкалах тата мĕнăсене, мина лартнă вырăнсене сиенсĕрлетме, ытти тĕрлĕ чăрмавсене те пĕтерме хĕçпăшалсăр çар сыннисем тата граждансем уйăрса памалла, вĕсен кирлĕ ĕç хатĕрĕсем пулмалла.

8-МĔШ СТАТЬЯ

Çăран, тинĕс-çар флочĕн, сывлăш флочĕн, судносен, портсенчи промышленноçăн тата ытти сферăсен тĕрлĕ оборудованийĕсемпе пурлăхĕсене, çавăн пекех тата пур тĕрлĕ документсемпе архивсене, вĕсем кирек ăста пулсан та, союзниксен представителĕсем кăтартса памасăр, нимĕн чухлĕ те çĕмĕрме, урăх вырăна куçарма, пытарма, урăх алла пама, шыва путарма е пăсма юрамасть.

9-МĔШ СТАТЬЯ

Сыхăнăвăн пур тĕрлĕ хатĕрĕсене те союзниксен представителĕсем контроллесе тăма пуçланччен, Германи контроллесе тăракан мĕнпур телеграф, телефон тата радио установкисем тата типçĕр çинчине шыври пралукла тата пралуксăр сыхăнăвăн урăх тĕрлĕ хатĕрĕсем те, союзниксен представителĕсем хушнă тĕслĕхсемсĕр пуçне, ĕçлеме чарăнмалла.

10-МĔШ СТАТЬЯ

Çак декларацире тата унпа килĕштерсе кăларакан ытти пур прокламацисенче, приказсенче, распоряженисенче, инструкцисенче каланисем Германире тăракан е вăл контроль туса пыракан, ун патĕнче службăра е унăн аллинче тăракан, анчах та союзлă державăсенчен пĕринпе те пулми вăрçакан кирек мĕнле урăх çĕршывăн харпăрлăхĕ пулса тăракан хĕçпăшаллă вăйĕсене, карапсене, самолетсене, çар пурлăхĕсене тата ытти харпăрлăха та пырса тивĕçĕ.

11-МĔШ СТАТЬЯ

а) Союзниксен представителĕсем кăтартса панă нацистсен тĕп лидерĕсене тата вăрçă преступленийĕсем е çавăн йышши урăх преступленисем тунăшăн, вĕсене тума хĕтĕртнĕшĕн е приказсем кăларнăшăн айăпа кĕнĕ çынсене, союзниксен представителĕсем вăхăтран вăхăта вĕсен ячĕсене, рангне, службăри вырăнне е должноçне кăтартса панă тăрах, арестлесе союзниксен представителĕсен аллине парăççĕ.

в) Пĕрлешнĕ кирек хăш нацин кирек хăш гражданинĕ те хăйĕн нацийĕн закончĕсене хирĕç пынине айăпа кĕнĕ пулсан, унăн ятне, рангне, службăри вырăнне е должноçне союзниксен представителĕсем кирек хăш вăхăтра та кăтартса нама пултараççĕ пулсан, «а» пунктра калани уншăн та вырăнлă пулать.

с) Германи влаçĕсемпе Германи халăхĕ союзниксен представителĕсем çакăн пек çынсене арестлесси тата союзниксен представителĕсен аллине парасси çинчен кăларакан распоряженисене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

12-МĔШ СТАТЬЯ

Союзниксен представителĕсем хĕçпăшалла вăйĕсене тата граждăнла организсене Германин кирек хăш пайĕнче те е пур çĕрте те хăйсем вырнаçтарас тенĕ пек вырнаçтарса тухаççĕ.

13-МĔШ СТАТЬЯ

а) Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешнĕ Королевствăн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствисем тата Франци республикин Вăхăтлăх правительстви Германи тĕлĕшпе хăйсем çине илнĕ Верховнăй влаçа пурнăçа кĕртсе пынă чухне, çак тăватă Правительство малашнехи мирпĕн тата харушсăрлăхпăн кирлĕ тесе шутлакан пур мерăсене те, вăл шутра Германие пĕтĕмпех хĕçпăшалсăрлантарассине демилитаризацилессине те туса пыраççĕ.

в) Союзниксен представителĕсем Германи умне вăл пуçĕнех параннинчен киленкен ытти политика, администраци, экономика, финанс, çар требованийĕсем те хушса каларса тăратаççĕ. Союзниксен представителĕсем е вĕсем хушнă тăрах ĕçлесе пыма уйăрса лартнă çынсем е органсем çав хушса панă требованиссене йĕркелесе пырас тата çак декларацирен тухса тăракан ытти положенисене пурнăçа кĕртсе пырас шутпа прокламацисем, приказсем, распоряженисем тата инструкцисем хатĕрлеççĕ. Германири мĕнпур влаçсен тата Германи халăхĕн союзниксен представителĕсен требованийĕсене пурне те пĕр сăмахçăр пурнăçа кĕртсе пымалла, çав прокламацисене, приказсене, распоряженисене тата инструкцисене, пĕтĕмпех пăхăнса пурăнмалла.

14-МĔШ СТАТЬЯ

Çак Декларапи аялта кăтартнă куçра тата сехетре вăя кĕрет. Германи влаçĕсем тата Германи халăхĕ çак Декларацире кăтартса панă обязательствасене хăварт тата пĕтĕмпех пурнăçа кĕртсе пыманăн союзниксен представителĕсем çав вăхăтра кирлĕ тесе шутлакан киреç ешĕ ĕçсем те тăваççĕ.

15-МĔШ СТАТЬЯ

Çак Декларацие вырăс, акăлчан, француз тата нимĕç чĕлхисемпе çырнă. Вырăс, акăлчан тата француз чĕлхисемпе çырнă текстсем кăна чи тĕрĕс текстсем пулса тăраççĕ.

1945 çулхи июнĕн 5-мĕшĕнче Берлин хулинче алă пуснă.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви хушнипе Совет Союзĕн Германири оккупацилле çарĕсен Главнокомандующийĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Г. К. ЖУКОВ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви хушнипе Арми генералĕ Д. ЭЙЗЕНХАУЭР.

Пĕрлешнĕ Королевствăн Правительстви хушнипе фельдмаршал Б. Л. МОНТГОМЕРИ

Франци Республикин Вăхăтлăх Правительстви хушнипе генерал ДЕЛАТР де ТАССИНЬИ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешнĕ Королевствăн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствисем тата Франци республикин Вăхăтлăх Правительстви Германире контроль туса тăракан аппарат çинчен пĕр-пĕринпе тухă Килĕшĕве кĕскен каласа пани

1. Германие пĕр сăмахçăр парăнтарнин тĕп требованийĕсене пурнăçа кĕртсе пынă вăхăтра Германири верховнăй влаçăн ĕçĕсене Совет, Британи, Америка тата Франци Главнокомандующийĕсем, кашни хăйсен зонинче, хăйсен тивĕçлĕ Правительствисен инструкцийĕсемпе килĕшӳллĕ туса пыраççĕ, пĕтĕм Германие тивекен ыйтусем тĕлĕшпе — пĕр-пĕринпе килĕштерсе пĕрле туса пыраççĕ. Тăватă Главнокомандующи пĕрле Контроль Совечĕ пулса тăраççĕ. Главнокомандующисенчен кашнинех Политика тĕлĕшпе ĕçлекен советник пулăшса пырать.

2. Контроль Совечĕ (вăл хăйĕн решенийĕсене пĕр саслăн йышăнать) Главнокомандующисен хăйсен зонисенчи ĕçĕсене тивĕçлипе килĕштерсе пыма май парать, çавнашкалах тата-пĕтĕм Германие тивекен тĕп ыйтусем тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе килĕшӳллĕ решенисем йышăнма май парать.

3. Контроль Совечĕ çумĕнче координаци тĕлĕшпе ĕçлекен яланхи комитет тăваççĕ. Унта кашни тăватă Главнокомандующирен пĕрер представитель кĕрет, çаван пекех тата контроль тăвакан персонал, çакăн пек отделсенче ĕçлеме уйăрнăскер, кĕрет (çĕрли опыта кура, отделсем улшăнма пултараççĕ):

Çар, тинĕс-çар, сывлăш-çар, транспорт, политика, экономика, финанс отделĕсем, репарацисем тĕлĕпше ĕçлекен отдел, поставкăсемпе реституцисем тĕлĕшне ĕçлекен отдел, шалти ĕçсемпе сыхăну, право отделĕсем, тыткăна лекнисем тата куçарса килпе сынсем тĕлĕшпе ĕçлекен отдел, ĕç вăйĕн отделĕ.

Кашни отделăн пуçĕнче кашни державăран пĕрер представитель, пĕтĕмпе тăватă представитель пулать. Отделсен составне çар сыннисем те, ахаль сынсем те кĕме пултараççĕ, уйрăм тĕслĕхсенче пĕрлешнĕ урăх нацин гражданĕсене те, частнăй сынсем вырăнне уйăрса янăскерсене, кĕртме пултараççĕ.

4. Контроль тăвакан персоналăн ĕçĕсене пĕтĕçтерсе пыракан комитетăн функцийĕсене çаксем кĕреççĕ: Контроль Советне рекомендацисем парасси, Советăн решенийĕсене пурнăçа кĕртсе, вĕсене Германин тивĕçлĕ органĕсен аллине парасси, çавăн пекех тата Германи органĕсен ĕçĕсене кунсерен тĕрĕслесе пырасси.

5. Питех те интересленекен Пĕрлешнĕ ытти написен правительствисем Контроль Совечĕне унта уйăрса янă çар миссийĕсем урлă сыхăну тытаççĕ (çав çар миссийĕсене гражданла членсем те кеме пултараççĕ). Çав миссисем контроль тăвакан органсемпе тивĕçлĕ майсемпе сыхăнма пултараççĕ.

6. Пĕрлешнĕ написен организацийĕсем, вĕсене Контроль Совечĕ Германире ĕçлеме ирĕк парсан, союзниксен контроль туса тăракан аппаратне пăхăнаççĕ, ун умĕнче ответлă пулаççĕ.

7. «Мăн Берлин» районĕнчи управлени ĕçĕсене Контроль Совечĕ пĕтĕмпне ертсе пынипе ĕçлекен комендатура туса тăрать, вăл тăватă комендантран—союзниксен представителĕсенчен тăрать; çав тăватă комендантран кашнинех черетпе главнăй комендант пулса ĕçлет. Вĕсене ĕçре техникăлла персонал пулăшса пырать, çав персонал Германин вырăнти органĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе пырать.

8. Çакăнта çулерех кăтартнă мероприятисене Германи паранна хыççăнхи оккупацин пĕтĕм вăхăчĕ тăршшĕнче пурнăçа кĕртсе пыраççĕ; çав вăхăтра Германие пĕр сăмахçăр парăнтарнин тĕп требованийĕсене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Ситес тапхăрти мероприятисем пирки уйăрам килĕшсе татăлаççĕ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешнĕ Королевствăн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствисем тата Франци республикин Вăхăтлăх Правительстви Пĕрлешнĕ ытти нацисен правительствисемпе канашласси çинчен килĕшӳ

Германи паранни çинчен 1945 çулхи июнĕн 5-мĕшĕнче Берлинра туна Декларапи тăрăх, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн, Пĕрлешнĕ Королевствăн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствисем тата Франци республикин Вăхăтлăх Правительстви Германи тĕлĕшпе верховнăй влаçа хăйсем çине илнĕç. Тăватă державăн Правительствисем халăпла пĕлтерĕççĕ: çав влаçа пурнăçа кĕртсе пына май, вĕсем Пĕрлешнĕ ытти написен правительствисемпе канашлама шутлаççĕ.

РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VI-мĕш сессийĕ

РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VI-мĕш сессийĕн 1945 çулхи июнĕн 5-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен

ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРЎ

Ĕнер, июнĕн 5-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, РСФСР Верховный Совечĕн лару залĕнче, Кремльте, РСФСР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VI-мĕш сессийĕ уçăлнă.

Председатель сĕтелĕ умĕнче: РСФСР Верховный Совечĕн Председателĕ **А. А. Жданов** юлташ, Председатель Заместителĕсем—**А. С. Тынчеров, М. В. Сарычева, М. З. Маялюкова, В. И. Недосекин, В. Г. Грабин, П. И. Иванова, С. Н. Гидаев** тата **Н. Г. Табанов** юлташсем.

Ломăсене СССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ **И. В. Сталин** юлташ, СССР Верховный Совет Президиумĕн членĕсем, СССР правительствин членĕсем, РСФСР Верховный Совет Президиумĕн членĕсем, РСФСР правительствин членĕсем пырса кĕрсен, сессири халăх вĕсене хисеплесе пумайччен тăвăллăн ала упнă.

Сессие РСФСР Верховный Совечĕн Председателĕ **А. А. Жданов** депутат уçать.

Жданов юлташ РСФСР Верховный Совечĕн VI-мĕш сессине пăхса тухмалли ыйусене вуласа парать.

П. С. Тарасов депутат РСФСР Верховный Советне пăхса тухма сĕннĕ ыйтусене РСФСР Верховный Совечĕн VI-мĕш сессийĕн кун йĕркине кĕртме сĕнет.

РСФСР Верховный Совечĕ, пĕрсасла пулса, çакăн пек кун йĕрки йышăнать:

1. РСФСР-ăн 1945 çулхи государство бюджетне сирĕплетесси тата РСФСР-ăн 1943-мĕшĕне 1944-мĕш çулхи государство бюджечĕсене пурнăçа кĕртни çинчен казакан отчета сирĕплетесси.

Ку ыйтăва Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратнă.

2. РСФСР Верховный Совечĕн Президиумĕн Указĕсене сирĕплетесси.

Ку ыйтăва РСФСР Верховный Совечĕн Президиумĕ тăратнă.

Сессин кун йĕркинчи 1-мĕш пункт тăрăх РСФСР-ăн 1945-мĕш çулхи государство бюджечĕ çинчен тата РСФСР-ăн 1943-мĕшĕне 1944-мĕш çулхи государство бюджечĕсене пурнăçа кĕртни çинчен РСФСР Финанс Халăх Комиссарĕ **А. А. Посконов** доклад туса панă.

Унтан вара РСФСР Верховный Совечĕ РСФСР Верховный Совечĕн Бюджет комиссийĕн председателĕн **И. А. Власов** депутатăн кун йĕркин 1-мĕш пунктĕ тăрăх—РСФСР-ăн 1945-мĕш çулхи государство бюджечĕ çинчен тата РСФСР-ăн 1943-мĕшĕне 1944-мĕш çулхи государство бюджечĕсене пурнăçа кĕртни çинчен—тунă содокладне итленĕ.

РСФСР Верховный Совечĕн Председателĕ **Жданов** депутат СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ сессие малалла ĕçлеме СССР Союзĕн Верховный Совечĕн Кремльти Асăлă Дворецри лару залне пани çинчен тата РСФСР Верховный Совет сессийĕн президиумĕ çав сĕнĕве кăмăлласа йышăнни çинчен пĕлтерет.

Вара çакăнпа РСФСР Верховный Совечĕн VI-мĕш сессийĕн пĕрремĕш ларăвĕ тупăнать.

Асăлă шкулсене вĕренме илмелли çĕнĕ правилăсем

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Асăлă шкул комитечĕ 1945 çулта СССР-ри асăлă шкулсене вĕренме кĕмелли çĕнĕ правилăсене сирĕплетнĕ.

Асăлă шкулсене кĕрес текенсен асăлă шкулăн специальноçне кура экзамен панăлла. Сăмахран, машиностроени, металлурги, электротехника, çăрт-ту, нефть, транспорт институтĕсемпе факультетĕсене кĕрес текенсен математикăпа, физикăпа, химипе, вырăс чĕлхипе, литературăпа тата ют çĕршыв чĕлхипе экзамен памалла. История, юридически, географи, библиотека институтĕсемпе факультетĕсене кĕрес текенсен—СССР халăхĕсен историйĕпе, географипе, вырăс чĕлхипе тата литературăпа экзамен памалла.

Вырăс чĕлхипе мар, ытти чĕлхепе вĕрентекен асăлă шкулсенче куншăр пуçне тата çав чĕлхе тăрăх экзамен партараççĕ.

Вăтам шкултан вĕренсе тухнă чухне «За отличные успехи и примерное поведение» ятлă ылттăн тата кĕмĕл медальпе наградăланнисене асăлă шкула экзаменсăрах илеççĕ. Ун малтан—ылттăн медаль илнисене, унтан—кĕмĕл медаль илнисене йышăнаççĕ.

Техникумсенчен нитĕ лайăх вĕренсе тухса кайсен специальноçĕ тăрăх асăлă шкула кĕрекенсене экзамен партармаççĕ. Вăтам шкултан 1944 çулта отличник аттестачĕпе вĕренсе тухнисене те экзаменсăрах илеççĕ. Медальсемпе наградăланă çынсем тата отличниксем архитектурăпа строительство институтĕсемпе факультетĕсене кĕреççĕ пулсан, вĕсене рисованипе тата черченипе экзамен партараççĕ. Художество, музыка тата физкультура институтĕсене кĕрекенсене — хăйсен специальноçĕсем тăрăх экзамен партараççĕ. Виçĕ çул хушши вĕренсе медицина шкулĕççисенчен тухнă отличниксене ытти çынсем пекех экзамен тытараççĕ.

Экзамен пăрса «посредственно» паллăран кая мар илнĕ çынсенчен чи малтан пысăкрах паллă илнĕ çынсене йышăнаççĕ.

Асăлă шкулсене илме ыйтса паракан заявленисене июнĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 31-мĕшĕччен илеççĕ. Сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшне çитиччен экзаменсем пулса иртеççĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ. (ТАСС).

КАШНИ КОЛХОЗАН ЧĂХ-ЧĔП ФЕРМИ ПУЛТĂР

Пирĕн çĕршыври колхозсенче чăх-чĕп фермисем ытларах та ытларах тума тăрăшаççĕ.

Тамбов облаçĕнчи Рассказово районĕнчи совет сĕн XII-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кăçал чăх-чĕп ферминне çĕнĕрен хута яма йышăнăнă. Чăх-чĕп ферми тума чăх-чĕн совхозĕнче 3000 чĕпĕ тата инкубаци станцийĕнче 00 кăвакал чĕпине 30 хур чĕпĕн илеççĕ. Колхозниксем кашни килтех икĕ чăхçын кая мар пуçма партма, колхоза 10 чĕпĕрен кая мар сиçĕ уйăха çитиччен ӳстерсе пама йышăннă. Тамбов облаçĕнчи пысăк колхозсем вара çав колхоз пек тума пуçланă.

Иваново облаçĕнче те, Краснодар крайĕнчи, Кемерово, Саратов, Сталинград тата ытти облаçсенчи районсенче те чăх-чĕп фермисем тума пуçланă. Новосибирск облаçĕнчи комсомолсепсем колхозсене шывра ишекен чăх-чĕпсен фермисене тума тата хурсемпе кăвакалсен йышне ӳстерме пулăшас тĕлĕшпе обязательство илнĕ.

РСФСР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çĕрĕç органĕсене çак юхăма кирлĕ таран пулăшма хушнă. Çĕрĕç органĕсен инкубаци станцийĕсене пĕтĕм вăйпа ĕçлеттерме, колхоз фермисем валли чĕпсем çителĕклĕ кăларса партарма тăрăшмалла, колхозниксен уйрăм хуçалăхĕсенче чĕпсем кăларас ĕçе тата вырăнта чăх-чĕп апачĕсем хатĕрлес ĕçе организацилемелле.

(ТАСС).

ПУЛА ЙЫШНЕ ӲСТЕРЕССИ

РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пулă пысăкĕсене йышлăлатасси тата сыхласа тăрасси çинчен постановлени йышăннă. Пулă промышленноçĕнчи трестсене 1945 çулта кӳлĕсемпе пĕвесене пулă чĕпписем тата хаклă йышши пуласен — ситăн, тĕрлядĕн, çунахăн, карăшăн тата ытти пуласен—инкубацилеме вăлчисене нумай ӳсе хушнă.

Казанпи облаçĕнче сига йышши пуласен вăлчисене инкубацилекен завода çĕнĕрен хута яраççĕ. Свердловск облаçĕпе Челябинск облаçĕнче çавăн пек заводсем икĕ тăваççĕ.

Пĕве хуçалăхне малалла аталантарма палăртнă. Кăçал кивĕ пĕвесене юсаса хута ямалла тата çĕнĕ пĕвесем тумалла. Çав пĕвесен пĕтĕм лаптăкĕ 4.000 гектар пулмалла. Пулă ĕрчетекен 19 питомник ӳваççĕ, вĕсем государство тата колхоз кӳллисемпе пĕвисенче ĕрчетме суллен 6,5 миллион карп чĕпĕн парса тăмалла.

(ТАСС).

Укçапа япаласен тăватăмĕш лотерейин выигрышĕсене тӳлеççĕ

РСФСР Наркомфинĕ укçапа япаласен тăватăмĕш лотерейин выигрышĕсен таблицисене пичетлесе кăларнă. Çав таблицăсене перекет кассисене, ял Совечĕсене, колхоз правленийĕсене, предприятисемпе учрежденисенчи государство кредичĕпе перекет ĕçне пулăшакан комиссисене ярса парраççĕ.

Укçан тӳлемелли 100 тенкĕлĕх выигрышсене перекет кассисем пурте тӳлеççĕ. 500 тенкĕлĕх выигрышсене—центрпине районри перекет кассисем тата пĕрремĕш разрядри кассăсем тӳлеççĕ. 1 000 тенкĕлĕх тата унтан ытларах выигрышсене—Перекет кассисен главнăй управленийĕсем тӳлет.

Выляса илнĕ япаласене Главнăй управлени лотерея билечĕсен хуçисене почта урлă хаклă посылка шучĕпе ярса парать.

Япала выляса илнĕ билет хуçи çав япала вырăнне укçа илме пултарать.

РСФСР Наркомфинĕ перекет кассисене тата государство кредичĕпе перекет ĕçне пулăшакан комиссисене предприятисенче, учрежденисенче, ял Совечĕсенче, колхозсенче, кил управленийĕсенче массăллăн тăрăслеме тата клубсенче, театрсенче, парксенче, стадионсенче тата ытти çавăн пек вырăнсенче выигрышсене тĕрĕслемелле сĕтелсем тума хушнă. (ТАСС).

Ĕççынни депутачĕсен районсовечĕсен исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне ăнăçлă тултарнăшăн тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстернĕшĕн малта пыракан çак колхозсене республикăри ХИСЕП ХĂМИ сине кĕртнĕ:

ШĂМĂРША РАЙОНĔ ТĂРĂХ:

34. **«Правда» колхоз** (председателĕ **О. В. Осипов** юлташ, ферма заведующийĕ **Смирнов** юлташ, старши конюх **Иванов** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 101 процент, майăпаклăлă шултăра выльăх енĕпе 101 процент, сыснасем енĕпе 128 процент, сурăхсем енĕпе 168 процент тултарнă. Майăн 25-мĕшĕ тĕлне 25 кĕсерен 16 тиха илсе сыхласа хăварнă.

35. **«Канаш» колхоз** (председателĕ **Богатов** юлташ, ферма заведующийĕ **Иванова** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 100 процент, майăпаклăлă шултăра выльăх енĕпе 107 процент, сыснасем енĕпе 107 процент, сурăхсем енĕпе 200 процент тултарнă.

36. **«Триер» колхоз** (председателĕ **Д. С. Матвеева** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана майăпаклăлă шултăра выльăх енĕпе 121 процент, сыснасем енĕпе 106 процент, сурăхсем енĕпе 205 процент тултарнă.

37. **«Новая деревня» колхоз** (председателĕ **Г. Ф. Давыдов** юлташ, ферма заведующийĕ **Иванова** юлташ, старши конюх **Родионов** юлташ) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 103 процент, майăпаклăлă шултăра выльăх енĕпе 111 процент, сыснасем енĕпе 100 процент, сурăхсем енĕпе 212 процент тултарнă. Çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа хăварнă.

Вăрлăх участокĕсене юпа лартса уйăраççĕ

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсем кăçал вăрлăх участокĕсене лайăх пăхаççĕ. Вăрлăх участокĕсене 68 гектар вĕтетнĕ улампа мульчировани тунă, 350 гектар ытла тислĕк шĕвекĕпе тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе анатлантарнă.

Чкалов ячĕпе тăракан колхозра вăрлăх участокĕ çинче Т. Ефимова юлташ звенине сирĕплетнĕ. Кунта вăрлăх участокĕсене кашни хиртех юпа лартса уйăрнă. Иртнĕ çулта çак колхозăн уйрăм участокĕсенче арăмути вăйлă тухнăччĕ. Ефимова юлташ организацилеменпе, 18 гектар пысăкăш лаптăка пĕтĕмпех çумкурăкĕсенчен тасатнă.

Вăрлăх участокĕсем çинче ĕçлеме районĕнче пурĕ 135 звено тунă, анчах та вĕсенчен 80 звено кăна хăйсен ĕçне тивĕçлипе йĕркеленĕ. «Кустарь», «Первое мая», Чкалов ячĕпе тăракан колхозсенче вăрлăх туса илес тĕлĕшпе организациленĕ звеносем уйрăмăнах лайăх ĕçлеççĕ. «Социализм» колхозра вăрлăх участокĕнче Егоров юлташ ертсе пыракан звено ĕçлет. Кунта вăрлăх участокĕсене кашни пусăрах лайăх палăртнă. Халĕ клевер акнă вырăнсенчен вăрлăх валли участок уйăраççĕ тата çак участока çум курăкĕсенчен тасатаççĕ.

Районри 22 колхозра вăрлăх участокĕсене юпа лартса уйăрнă. 49 колхозра çуртыррисем акнă вырăнсенче кăна палăртнă тунă. «Красный волгарь» колхозра вăрлăх участокĕсене пĕтĕмпех юпа лартса палăртнăччĕ. Анчах та вăрлăх участокĕсене лайăх асăрхаса тăваннине пула, çак юпасене вутă хутма кăларса пĕтернĕ. Халĕ çĕнĕрен юпа лартма тивĕрĕ.

Çитес вăхăтрах вăрлăх участокĕсене юпа лартса уйăратпăр тата кашни колхозрах калчасене апатлантарассине организацилетпĕр.

А. СПИРИДОНОВ.
Районри çĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Çулйĕр строительствинчи çирĕмкунлăх

ÇУЛЙĔР СТРОИТЕЛЬСТВИНЕ ПУР КОЛХОЗСЕМ ТЕ ХУТШĂННĂ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июнĕн 6-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районри пур колхозсем те çулйĕр строительствин çирĕмкунлăхне хутшăннă. Çирĕмкунлăх пуçланнăранпа районĕпе 620 кубометр чул, 225 кубометр хăйăр кăларса турттарнă, Шупашкартан 100 кубометр йывăç кӳрсе килнĕ, 18 километр тăршшĕ çул юсанă, кĕперсем тунă. Кĕперсем тăвас ĕç малалла пырать.

Çулйĕр строительствинче кашни кун 520—530 çын çуран, 300 çын лашапа ĕçлеççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Янкас, Итмар, Яманак тата Ямбахтино ял Советĕсенчи колхозсем аван ĕçленине палăртмалла. «Красное Сормово», «Çĕнтерӳ» тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсенчен çул çинче каншн кун 60—70 çын ĕçлеççĕ. Итмар ял Советĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз çулйĕр ĕçĕн планне пилĕк кунра тултарчĕ. Колхоз пурĕ 24 кубометр чул кăларса турттарчĕ, 420 кубометр чухлĕ çĕр ĕçĕ турĕ. Кунти çулйĕр бригадине И. Анатольев юлташ ертсе пырать. Бригада членĕсем В. Захарова, А. Лукина тата В. Волков колхозниксем ĕç нормине 150 процент тултараççĕ.

«Партизан», «Сила» колхозсем те çулйĕр строительствинче активлăн ĕçлеççĕ. Ку колхозсенчен çул çинче А. Николаев, А. Захаров, А. Петров тата Л. Кириллов колхозниксем тухăçлă ĕçлеççĕ.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Хăйăрпа çул сахăл тӳртнă

СĔНТĔРВĂРРИ. Районри хăшпĕр колхозсем çулйĕр строительствин çирĕмкунлăхне активлăн хутшăнчĕç. Уплерти «Наука Ленина» колхозран çул çинче кунсерен 27-шер çын ĕçлет. Вĕсем çулйĕрсене, кĕперсене юсаççĕ, çул çине сарма хăйăр тата чул турттараççĕ.

Çулйĕрсене юсас ĕç Астакасси ял Советне керекен «Большевик», «Пищевик» тата Турханкассинчи «Верный путь» колхозсенче те аван пулса пырать. Ку колхозсенчен çулйĕр строительствинче кунсерен 12—15-шер çын çуран, 3—4 çын лашапа ĕçлеççĕ.

Районра çулйĕрсене юсас ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Уйрăмах хăйăр, чул турттарас ĕçсем япăх пыраççĕ.

И. ОСИПОВ.

Шкулсенчи экзаменсем

Вĕренекенсен пĕлĕвне тĕрĕс тахламалла

МУРКАШ, июнĕн 6-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Экзаменсемпе пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пур шкулсенче те лайăх иртсе пыраççĕ. Вăтам шкултан вĕренсе тухса çитĕнсе çитнине пĕлтерекен аттестат илме районра 52 вĕренекен экзамен тытать. Ĕнер алгебрăпа пулнă экзаменра 52 вĕренекенрен 12 вĕренекен «пиллĕк» тата «тăваттă» илчĕç, 29 вĕренекен «виççĕ» тата 11 вĕренекен «иккĕ» илчĕç. Районра 4 вăтам шкул. Экзаменсенче Муркашри вăтам шкулта вĕренекенсем программăна лайăх пĕлнине катартса пачĕç. Ку шкулта вĕренекенсенчен нумайĕшсем «пиллĕк» тата «тăваттă» палласем илеççĕ. Оринийăри вăтам шкулта вĕренекен М. Астраханцева тата Йӳçкассинчи вăтам шкулта вĕренекен А. Тимофеева ку тараннăчен пулнă экзаменсенче пур предметсемпе те «пиллĕк» илсе пычĕç. Вĕсем ытти предметсемпе те «пиллĕк» илессишĕн тăрăшаççĕ.

Çавăн пекех Ярапайкассинчи, Янăшри тата Шурчари çинче çул вĕренмелли шкулсенче вĕренекенсем те экзаменсемпе пĕлӳ тĕрĕслевĕсенче вĕренӳ программине тĕплĕн пĕлни куранать. Ярапайкассинчи çинче çул вĕренмелли шкулта (директорĕ К. Тетерина юлташ) 7-мĕш класран вĕренсе тухма 20 ача экзамен тытать. Вĕсенчен экзамен парайман пĕр ача та çук. Вырăс чĕлхипе 10 вĕренекен «пиллĕк» тата «тăваттă» илнĕ. Нумай ачасем ытти предметсемпе те лайăх паллăсем илеççĕ.

Экзаменсемпе пĕлӳ тĕрĕслевĕсем хăшпĕр шкулсенче вĕренӳ ĕçĕ кирлĕ вăхăтра пулманнипе катартса пачĕç. Тойкильтĕри çичĕ çул вĕренмелли шкулта 4-мĕш класран вĕренсе тухакансем вырăс чĕлхине çителĕксĕр пĕлеççĕ. Ку предметпа 18 ачаран 16 вĕренекен экзамен парайман. Ку класри учительница К. Сидорова юлташ ачасене çирĕп пĕлӳ парассишĕн тăрăшса вĕрентмен. Çавăн пекех Кашмашри çичĕ çул вĕренмелли шкулта та 7-мĕш класра вĕренекенсенчен вырăс чĕлхипе çурри ытла экзамен парайман.

Хăшпĕр шкулсенчи учительсем вĕренекенсен çыру ĕçĕсене тĕплĕн вуласа тухса тивĕслипе хаклаççĕ. Çыру ĕçĕсене учительсем тĕрĕслесе хаклана хыççăн та 7—8 йăнăш тупăнать. Пăсăрмăлти пуçламăш шкул заведующийĕ Дмитриева юлташ пĕр вĕренекенĕн çыру ĕçĕнче 5 йăнăш тӳрлетмесĕр хăварнă. Çапла вара вĕренекен ĕçне тивĕçсĕр лайăх паллăпа хаклана. Матьăкри пуçламăш шкулта 4-мĕш класс учительницин Тиренева юлташ та вĕренекенсен çыру ĕçĕнче 7—8 йăнăш тӳрлетмесĕр хăварнă. Çака ĕнтĕ хăшпĕр учительсем экзамен çине çиелтен пăхни, инструкцие пăсни çинчен калать.

Комсомол райкомĕнче ĕçлекенсем шкулсенчи экзаменсемпе пĕлӳ тĕрĕслевĕсем мĕнле иртсе пынине пачах интереслемеççĕ. ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Артемьева юлташ экзаменсем пуçланнăранпа пĕр шкулта та пулман. Комсомол организацийĕсем шкул директорĕсене, учительсене пулăшни çук.

Ф. МАЛЫШКИН.
(Хамăр корр.)

Копенгаген халăхĕ совет делегацине хавасланса йышăнни

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Швеци хаçачĕсем Копенгагена совет офицерĕсен ушкăнĕ пырса курни çинчен чи курăнмалли вырăнта, пысăк заголовоксем парса, тĕплĕ отчетсем пичетлесе кăларнă. Совет офицерĕсен ушкăнне Коротков генерал-лейтенант ертсе пынă. Копенгагенри хаçатсем Хĕрлĕ Çар представителĕсене Дани столицин халăхĕ çав тери хĕпĕртесе йышăнни çинчен сырассĕç.

«Стокгольм Тиднинген» ятлă хаçатăн Копенгаген хулинчи корреспонденчĕ çапла сырать: Данире Хĕрлĕ Çара пĕтĕм кăмăлпа питĕ хавасланса саламлассĕç. «Дагенс Нюхетер» хаçатăн корреспонденчĕ совет офицерĕсене йышăнни çинчен питĕ тĕплĕн çырса кăтартать. Вăл çырнă тăрăх, совет офицерĕсене йышăнни унта чăннипех халăх праздникĕ пулса тăнă. Вăл çапла çырать: Данири темиçе пин çын, совет флагĕсем çĕклесе пырса, Коротков генерал-лейтенанта саламланă. «Бурмейстер ог Вайн» ятлă вĕрĕри рабочисем совет офицерĕсене ĕçлеме пăрахсах тата çав тери ăшшăн йышăннă. Копенгагенри корреспондентсем Коротков генерал-лейтенанта король йышăнни çинчен сырса пĕлтереççĕ. Çаван пекех корреспондентсем унти театрта оперăна питĕ чаплă кăтартни çинчен тата Данин ют çĕршыв çĕçĕсен министрĕ Кристмас Миллер совет офицерĕсен ячĕпе апатлану туса ирттерни çинчен сырассĕç.

БАЛКАН ÇУРУТРАВĔНЧИ ÇАМРĂКСЕН СЪЕЗЧĔ УМĔН

БЕЛГРАД, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Май уйăхĕн иккĕмĕш çурринче Белградра Балкан çурутравĕнчи çĕршывсен çамрăкĕсен пĕрремĕш съезчĕ пухăнса çинчен калаçусем пынă. «Млади Борац» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, съезда июлĕн 8-мĕшĕнче Белград хулинче пухма йышăннă.

Балкан çурутравĕнчи çĕршывсенчен **кашниех**—Югослави, Болгари, Румыни, Греци тата Албани—съезда вуншар делегат ямалла.

Съездра çакăн пек докладсем пулмалла: «Балкан çурутравĕнчи çамрăксем фашистла агрессорсене хирĕç пыракан ирĕклĕх вăрçине хутшăнни çинчен» (докладчик—Греци çамрăкĕсен делегачĕ); «Мир тăвас ĕçре Балкан çурутравĕнчи çамрăксен задачисем» (докладчик—Югослави çамрăкĕсен делегачĕ); «Балкан çурутравĕнчи çамрăксен экономикăпа социальнăй пурнăçĕ» (докладчик—Болгари çамрăкĕсен делегачĕ): «Çамрăксен вĕренĕшĕ, культури, спорчĕ тата канăçĕ» (докладчик—Румыни çамрăкĕсен делегачĕ); «Балкан çурутравĕнчи çамрăксен пĕрлĕхене тăвасси» (докладчик—Албани çамрăкĕсен делегачĕ).

АМЕРИКА ЮРИСЧĔСЕМ ВĂРÇА ПРЕСТУП НИКĔСЕНЕ СУД ТАВАССИ ÇИНЧЕН

САН-ФРАНЦИСКО, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри юристсен общести хаçат-журналсенче пичетлесе кăларма сыру панă. Çав сырура вĕсем «Лейф» журналта пичетленсе тухнă статьяна палăртса хунă. Журнал статьинче çапла калланă пулнă: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемшĕн пулсан, нацистсене пĕтересси питех кирлĕ мар, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене Европăри закон идейисене сарасси ытларах кирлĕ, теннĕ.

Общество представителĕсем хăйсен сыравĕнче çакна уççăн кăтартса панă: вăрçă преступникĕсене суд туса айăпличчен Европăра нимĕнле закон та çирĕпленсе çитме пултарас çук, теннĕ. Халăхсен правине тивĕлĕхĕ—вăл хăйне законсăр йĕркерен хӳтĕлесе тăрасси. Тĕнчери халăхсен шухăш-кăмăлĕн çав принципĕ цивилизацийлĕ мĕнпур çĕршывсен юридици кодексĕсенче тĕп вырăн йышăнса тăрать.

Тĕнчери халăхсене улталаса, вĕсене хăратса, çав тери хаярран тыткалас тĕллевпе анлăн каварлашса вăрттăн хатĕрленнине кăтартса парса, юристсен обществин представителĕсем çапла сырăнă: «Нацистсен правительстви халăхсене хирĕç усал ĕç тума çав тери вăйлăн хатĕрленни историре ку тараннăчен пулман ĕç. Çав ĕçе пурнăçа кĕртмелли планла çар завочĕсен хуçисем хатĕрлесе панă, вара ăна нацистсен пуçлăхĕсем, штурмовиксем, гестаповецсем Германире тата пиллĕçсем оккупацинĕ пур государствăсенчи кашни хуларах, кашни ялтах пурнăçа кĕртсе пынă. Çав ĕçе хуттăнă çынсем кашниех тĕнче общественине хирĕç, американецсене хирĕç тунă усал ĕçсемшĕн айăплă, çавăнпа вĕсене кашниех суд туса айăпламалла.

Юристсен обществи шутланă тăрăх, Муссолинине суд туни юридини тĕлĕшĕнчен пĕтĕмпех тӳрĕ тунă ĕç пулса тăнă. Вăрçă преступникĕсене çапла суд тума кирли çинчен каланнă та ĕнтĕ Рузвельт Ялта хулинче. Рузвельт каланнă тăрăх, вăрçă преступникĕсене суд тăвассине пур кирлĕ-кирлĕмар мелсемпе тăсса пымалла мар. Юлашкинчен, Америкăри юристсен обществи Геринга, Лея, Штрейхера, Деница, Йодля, Тиссена, Шахта, Крупна тата ыттисене те çавăн пек суд тума кирли çинчен кăтартса панă.

РУМЫНСЕН ФАШИСТЛА ЖУРНАЛИСЧĔСЕМ ПИРКИ ЙЫШĂННĂ ПРИГОВОР

БУХАРЕСТ, июнĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Румынин халăх трибуналĕ ĕнер румынсен фашистла 14 журналисчĕ пирки приговор йышăннă. П. Шейкарупа Г. Манулескуна, хăйсен çĕршывĕнчен кайса Румыни тăшманĕсемшĕн ĕçлекенскерсене, вĕлермелле тунă. И. Радулескуна (ăна вăрçа хуттăнма хĕтĕртнĕ тесе айăпланă) ĕмĕрлĕхе каторгăна ямалла тунă. П. Крайника, С. Попескуна, Г. Баланескуна, Р. Сейшануна, И. Прунденне, А. Космана, Р. Визирескуна ĕмĕрлĕхе тĕрмене хупмалла тунă. И. Думитрескуна, Р. Дануна, А. Хороша 20 çуллăха тĕрмене хупмалла тата 10 çуллăха граждăн прависемсĕр хăвармалла тунă. Р. Дметреску-Жира 12 çуллăха тĕрмене хупмалла тата 5 çуллăха граждăн прависемсĕр хăвармалла тунă. Çав çынсен пурлăхĕсене туртса илмелле.

НИМĔÇСЕН ДАНИРИ ÇАРĔСЕН КОМАНДУЮЩИЙĔ ПУЛНĂ ЛИНДЕМАНА ТЫТСА ХУПНĂ

ЛОНДОН, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: июнĕн 1-мĕшĕнче нимĕçсен генералне Линдемана тытса хупнă. Вăл Фюн утравĕ çинче пĕр пĕчĕк пӳртре пытанса пурăннă. Линдеман вăл нимĕçсен Данири çарĕсен командующийĕ пулнă. Пурте çапла шутлаççĕ: оккупацин юлашки уйăхĕсенче Дани халăхне çав тери хĕсĕрлесе хаярран тыткаланăшăн Линдеман айăплă, теççĕ. Германи парăннă хыççăн Линдеман нимĕçсен çарне Германие куçарас ĕçе ертсе пынă. Вара ун хыççăн вăл Фюн утравĕ çинче тарнă.

АКАЛЧАНСЕМ ПАЛЛĂ ГИТЛЕРОВЕЦСЕНЕ ТЫТСА ХУПНИ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин акалчансен 2-мĕш армийĕнчи çарĕсемпе пĕрле çӳрекен корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: акалчансем чылай паллă гитлеровецсене тытнă. Вĕсен шутĕнче çаксем пур: Богемипе Моравире полици начальникĕ пулнă Далюге генерал-полковник, эсэсовецсен резерври армийĕн главнокомандующийĕ Ютнер генерал, нацистсен партийĕн политика отделĕн представителĕ Лоренц генерал, шюцкорта тăнă çынсен отделĕн начальникĕ фон Херф генерал, Саксонири полици начальникĕ фон Войрш, Гитлерăн хăйĕн канцелярийĕн начальникĕ тата унăн ĕç туса тăнă секретарĕ Мейснер, империн сывлăх ĕçăн руководителĕ Конти, Ганновер гаулейтерĕ Гельшов, Мекленбург гаулейтерĕ Хильдебрандт тата Шлезвиг-Гольштейн гаулейтерĕ Лозе.

Пăпкă океан çинчи вĕçĕ

ВАШИНГТОН, июнĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Пăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: июнĕн 4-мĕшĕнче американецсен тинĕс пехотин чаçĕсем Окинава утравĕн Ороку çурутравĕ çине Наха хулинчен кăнтăртарахра аннă та унта укрепленни туса хунă. Японецсем вăйлă хирĕç тăман. Американ ытти сарĕсем çав утрав çинче 4 пункт йышăннă.

Июнĕн 3-мĕшĕнче Япони самолечĕсем Окинава утравĕ районĕнче Америка судписем çине бомбăсем пăрахнă. Американ пĕр пысăк мар суднине сиенленĕ. Японин 45 самолетне персе ӳкернĕ.

ВАШИНГТОН, июнĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Американ бомбардировка авиацийĕн 21-мĕш подразделенийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: июнĕн 5-мĕшĕнче американецсен «Вĕçекен крепость» йышши хăватлăран та хăватлă 500 бомбардировщикне яхăн Японин Кобери промышленноçлă районĕсем çине 3.000 тонна таран вут тивертекен бомбăсем пăрахнă.

ИРАН ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ШАНМАННИ

ТЕГЕРАН, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Июнĕн 3-мĕшĕнче Иран меджлисĕн ларăвĕнче премьер-министр Хакими тухса каланнă. Ун хыççăн меджлис правительство программине сӳтсе-явма пăрахнă. Унтан вара сасăланă. Ларура пулнă 95 депутатран правительство программишĕн мĕн пурĕ те 25 çын кăна сасă панă, программăна хирĕç 7 çын (халăх партийĕн фракцийĕ) сасă панă, ытти депутатсем сасăламан.

Çапла вара, Хакими правительствине Иран меджлисĕ шанман.

ДЭВИС ВАШИНГТОНА ТАВРАННА

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Совет Союзĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен посолĕ пулса ĕçленĕ Л. Дэвис, США президенчĕ Трумэн хушнă тăрăх Лондонра пулнă хыççăн, июнĕн 3-мĕшĕнче Вашингтона тавраннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печать. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 3—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, культурăпа пропаганда пайĕн — 3—89, издательство конторин — 0—23.

НТ 00131 Типографи № 1 Управления по делам полиграфической промышленности СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 18.000